


# ĂÇТА ЧУПАТПĂР?

**Нумаях пулмасть «Советская Чувашия» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Патшалăх Канашĕн депутачĕ Игорь Моляков хӳтĕлесе, Арбитраж судĕнче «Волганефтьхолдинг» ООО представителĕн тивĕçне пурнăçласа, çак компани правине Çĕрпӳ тата Гагарин урамĕсем хĕресленнĕ вырăнта тунă АЗСа ĕçе кĕртессипе çыхăннă ыйтăва татса пама хутшăннă-мĕн.**

Революцишĕн çулăмпа çунакан трибун Дельманăн нефть олигархĕсемпе пĕр кимĕ çинче пулнине унăн электорачĕ мĕнлерех кăмăл-туйăмпа йышăнĕ-ши? Бензоколонкăсемпе кĕрешнĕ май, вăл хăй вăхăтĕнче мĕн чухлĕ хаяр сăмах каламан-ши? Çав строительствăна çул паракансене вăл темĕн тĕрлĕ те айăпланă-çке. Хаяр сăмахсем çырнă транспарантсен айĕнче вăл хăйĕнпе пĕр майлисемпе çĕр каçни те пулман мар. Сасартăк – тĕлĕнмелле пысăк улшăну. Партин шанчăклă кадрĕ судра «Волгонефтьхолдинга» çав объекта ĕçе кĕртме чармалла маррине кăтартса парасшăн пулнă.

Такам интересĕсене хӳтĕлеме кӳлĕниччен чи малтан хăйĕн хăй çине йăтăнса аннă çитменлĕхсен серепинчен хăтăлса тухмалла та! Ара, Моляков элекленĕшĕн икĕ хутчен судпа айăпланнă-çке, унăн пулăшаканĕ А. Имендаев çав статьяпах СИЗОра ларать. Кăшт маларах кăна депутатăн малтанхи суйлавĕнче унăн пулăшаканĕ пулнă М. Громов большевик-национал та хулиганла ĕç тунăшăн решетке хыçне лекнĕ. Нумаях пулмасть Мускавра паллă мар лару-тăрура Моляковăн тепĕр пулăшаканне – А. Левина персе вĕлернĕ. «Коммерсант» хаçат çапла çырнă: «Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствин УБОП пуçлăхĕн çумĕ Юрий Федотов пĕлтернĕ тăрăх, Анатолий Левин Шупашкарти криминал ушкăнĕнче паллă çын пулнă. Вăл Шупашкарти Çĕнĕ Кăнтăр районĕнчи преступниксен ушкăнĕн хастар членĕ пулнă май, çак районта хуçаланма ĕмĕтленнĕ, – тенĕ вăл. – Левин гражданина эпир темиçе хутчен те, çав шутра хĕç-пăшал, боеприпассем упранăшăн тытса чарнă. Эпир шутланă тăрăх, ку вилĕм – бандитсен «тишкерĕвĕн» кăтартăвĕ».

Моляков иртнĕ кунсенче РФ Компартийĕнчен тухни çинчен пĕлтернĕ. «Халĕ тĕпĕ-йĕрĕпех çакна ăнланса илтĕм, партин çӳлте ларакан ертӳçисен сăмахĕсемпе ĉĕнĕвĕсен хыçĕнче тĕллевлĕ ĕçсем сахал тата çав парти пулса тăнă лару-тăрăва улăштарма пултараймасть, – тесе çырать вăл. – Паллă ĕнтĕ, Компарти çулкуçĕсем вĕсем – намăссăр çынсем, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕллевĕ – çынсемшĕн мар, хăйсен интересĕсемшĕн тăрасси».

РФ Компартийĕн Чăваш рескомĕн секретарĕ Д. Евсеев «Регнум» агентство урлă çапла ӳпкелешнĕ: «Ун тавра мĕн пулса иртет-ха? Тен, кам та пулсан унăн ятне ярасшăн мар-ши? Тен, ăна, начар мар укçапа илĕртсе, урăх парти списокĕсене кĕме сĕннĕ?»

Ку хутĕнче Моляков хăш парти енче пулĕши?

## НУЖНА ПОДДЕРЖКА НА БЛАГОРОДНОЕ ДЕЛО

Министерством здравоохранения и социального развития ЧР принято решение о выделении Ибресинскому району врача специалистапатологоанатома и финансовых средств на специализированное оборудование для открытия в Ибресинском районе патологоанатомического отделения. В настоящее время жители Ибресинского района вынуждены производить вскрытие трупов в Вурнарской ЦРБ в количестве более 400 человек в год, что доставляет большие неудобства и затраты предприятиям и населению района. В связи со сложившейся ситуацией и недостатком бюджетных средств, Советом работодателей Ибресинского района от 18 июня 2007 года принято решение по открытию целевого счета для сбора финансовых средств на ремонт морга Ибресинской ЦРБ и перечислению в размере однодневного заработка с каждого работника предприятий, организаций, учреждений всех форм собственности, но не менее 150 рублей на каждого работника; предприятия, работающие по исполнению муниципальных заказов, не менее – 200 рублей на каждого работника; индивидуальные предприниматели – не менее 500 рублей.

Сметная стоимость проведения ремонта бывшего здания патологоанатомического отделения составляет более 500 тыс. рублей.

В настоящее время ремонтно-строительные работы начаты предприятием ЗАО МСО «Ибресинская».

**РЕКВИЗИТЫ ДЛЯ ПЕРЕЧИСЛЕНИЯ:**
**р/с 40702810675120000123**
**Банк получателя:**
**Чувашское ОСБ №8613 г. Чебоксар**
**БИК 049706609**
**к/с 30101810300000000609**
**Получатель: ЗАО МСО «Ибресинская»**
**Канашское ОСБ №7507 г. Канаш**
**ИНН 2105000308**
**КПП 210501001**
**ОКАТО 97213000001**

Контроль за использованием денежных средств, поступивших на расчетный счет ЗАО МСО «Ибресинская», будет осуществляться рабочей группой, созданной Советом работодателей.

Надеемся на взаимопонимание и финансовую поддержку благородного дела.

**А. КУЗЬМИН,**
**председатель совета работодателей района,**
**О. ТИМУКОВА,**
**секретарь совета работодателей района.**

# ХАЛĂХПА ПĔРЛЕ, ВĂХĂТ УТТИНЧЕН ЮЛМАСĂР

*(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).*

митечĕн председателĕ Константин Косачев, Раççей Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») фракци членĕ Павел Семенов хутшăнчĕç, сăмах тухса譯 каларĕç. Конференци тивĕçлĕ решени йышăнчĕ, политканашăн çĕнĕ йышне суйларĕ, контрольпе ревизи комиссине çирĕплетрĕ.

Кăçал асăннă партин пирĕн районти уйрăмĕн вырăнсенчи пуçламăш организацийĕсенче те отчетсемпе суйлавсем иртрĕç, вĕсене ертсе пыма чи шанчăклă çынсене суйласа лартнă. Ака уйăхĕнче иртнĕ конференцире Йĕпреç районĕнчи политика канашĕн йышне 15 çынна çити ӳстертĕмĕр. Канаш членĕсем партин умра тăракан задачисене çывăх ăнланаççĕ, халăхăн пурнăç пахалăхне ӳстересси вара тĕп вырăнта тăрать. Хальхи вăхăтра парти членĕсем çине тепĕр яваплăх тиенчĕ: РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думине депутатсем суйламалли суйлав вăхăчĕ çитсе пынă май, çак суйлавра районти суйлавçăсенчен ытларах тĕрев илессишĕн мĕнпур вăйсене çав ĕçе хывасси.

Партин районти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ пулнă май, эпĕ çакна лайăх пĕлетĕп: районти единороссем Раççей Президенчĕ палăртнă наци проекчĕсене пурнăçлассишĕн хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăваççĕ. Президент каланă пекех, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти членĕсемшĕн популизм ют, вĕсем пуш сăмах çаптармаççĕ – курăмлă ĕçсем тăваççĕ.

***– Вячеслав Людвикович, парти членĕсен задачисемпе курăмлă ĕçĕсем çинчен тĕплĕнрех каласа парăр-ха?***

– «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин халăх умĕнчи ырă ĕçĕсем çинчен нумаях пулмасть политканашăн районта иртнĕ анлă ларăвĕнче тĕплĕн каласа панăччĕ. Халĕ хаçат вулакансене хапăл тусах пĕлтеретĕп: пирĕн парти суйлавçăсен наказĕсене, сĕнĕвĕсене шута илсе пурнăçа кĕртессипе çине тăрсах ĕçлет. Çакна пирĕн районта пурнăçлакан пысăк ĕçсем те çирĕплетеççĕ.

«Таса шыв» проекта илер-ха акă. Çак проектăн тĕп тĕллевĕ – халăх куллен усă куракан ĕçмелли шыв пахалăхне лайăхлатасси. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци тĕрев панипе кăçалхи çулталăк пуçланнăранпа çак проекта пурнăçлама республика бюджетĕнчен 120 млн. тенкĕ укçа куçарнă, çав шутран çуррине – 60 млн. тенкине – Йĕпреçри шыв пăрăхĕсене хывма уйăрса панă.

ЧР Президенчĕн Н. Федоровăн сĕнĕвĕпе Хĕр юханшывĕнчен илсе килме пăхнă шыва уçласа тасатмалли сооруженисене тума тепĕр 90 млн. тенкĕ куçармалла. Çак ĕçсем хĕрсех пыраççĕ, кĕçех унтан илекен шыв Буинск поселокĕнчи тасату станцийĕнче тасалса тухнă хыççăн Буинск, Йĕпреç поселокĕсене çитет, унтан районти халăх пурăнакан ытти пунктсене шыв пăрăхĕсем хывăнĕç. Çак тĕслĕх парти çынсен нушисене лайăх ăнланнине кăтартса парать те ĕнтĕ.

«Раççейĕн агропромышленноçĕ» проект та яллă вырăнсенче пурăнакан мĕнпур Раççей халăхĕн пурнăçне лайăхлатма тивĕç. Патшалăх Думин «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци сĕнĕвĕпе Патшалăх Думи 2006 çул вĕçĕнче «Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен» Федераллă саккун йышăнчĕ. Чăваш Ен Президенчĕпе Николай Федоровпа Раççей ял хуçалăх министрĕ Алексей Гордеев калаçса килĕшнипе килти хушма хуçалăха аталантарма паракан çăмăллăхлă кредита 2007 çулта Чăваш Ене иртнĕ çултинчен икĕ хут ытларах уйăрса пама пăхнă. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти çине тăнипе 2006 çулта Чăваш çĕршывĕнчи 13 пине яхăн çемье, çав шутра Йĕпреç районĕнчи 512 çемье çак кредита 1 млрд. 812 млн. тенкĕ чухлĕ илме пултарчĕç пулсан, кăçал ку таранччен 23302 çемье (Йĕпреç районĕпе илсен, çав шутран 922 çемье) çăмăллăхлă кредита илсе килти хушма хуçалăха аталантарма, çавна май хăйсен бюджетне хулăнлатма пултарчĕç. Палăртмалла, ку кăтарту – пирĕн çĕршывра чи лайăххи.

«Хамăн çурт» проект пирки те кĕскен каласа хăварас тетĕп. Унпа килĕшӳллĕн пурнăç условийĕсене лайăхлатма шутлакан çемьесем юрăхлă хакпа уйрăм çуртсем туса лартма пултараççĕ. Патшалăх программи сахал тупăшлă çемьесемшĕн, социаллă хӳтлĕхсĕр категорие кĕрекен граждансемшĕн (ветерансем, инвалидсем, бюджет сферинче ĕçлекенсем, тăлăхсем т. ыт. те) вырăнлă.

Чăваш Енре 2006 çулта 854,5 пин тăв. метр чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр тунă, Йĕпреç районĕпе илсен 28,8 пин тăв. метр е 238 çемье пурнăç условийĕсене лайăхлатнă. 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта пурăнмалли çуртсене хута ярассин планне 115,4 процент пурнăçланă. Чăваш Енре пĕр çын пуçне çурт ĕçе кĕртесси кӳршĕллĕ ытти республикăрисенчен 2-3 хут ытларах пулса пырать.

«Хăрушлăхсăр çулсем» проект пирки калас пулсан, вăл мĕнле пурнăçланнине пирĕн район çыннисем хăйсен куçĕсемпе хăйсем курса тăраççĕ ĕнтĕ. Республика парламенчĕ «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци депутачĕсем сĕннипе 2007-2008 çулсенче республикăри халăх пурăнакан кашни ялпа поселока хытарнă çулсемпе çыхăнтарасси çинчен ятарлă программа йышăннă.

Çак задачăна пурнăçа кĕртме икĕ çулталăка 9 млрд. тенкĕ чухлĕ укçа уйăрнă. Çав шутран пирĕн районти 17 ялпа поселока çул тума 400 млн. тенкĕ уйăраççĕ. Костерпа Мереçен поселокĕсене хывнă çулсене нумаях пулмасть савăнăçлă лару-тăрура уçнă. Çирĕплетнĕ программăпа килĕшӳллĕн кĕçех Çиçĕмкассине, Калиновкăна, Анатрияла хытарнă çулсем туса пĕтермелле, унтан шанчăклă çулсем Красная Заря, Орел, 11 лет Чувашии, Çĕнĕ Пурнăç, Алшик, Спотара, Кушакпуç, Ленино поселокĕсене хывăнмалла.

«Сывă чĕре» проект çинчен те виçĕ сăмах каласа хăварам. Проект тĕллевĕ – халăхăн пурăнас çулĕсене 3-5 çул вăрăмлатасси, Раççейри халăх вилеслĕхне çулталăкне 300-500 çын чухлĕ чакарасси. Чĕре чирĕсемпе чакарас енĕпе туса хатĕрленĕ профилакăлла программăсем ĕçлеççĕ халĕ. Чăваш Ен вара «Сывлăх» приоритетлă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн больницăсене «Васкавлă пулăшу» машинисемпе 100 проценчĕпех тивĕçтернĕ регион. Пирĕн район больницине те 4 çĕнĕ автомобиль ярса панă.

Çакна палăртсах каламалла, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти тĕрев панипех Чăваш Тимешри 260 ача вырнаçмалăх çĕнĕ шкул çуртне 7 уйăхра туса пĕтерме май килчĕ. Ăна тума тытăнсанах строительство мĕнле пынипе «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Генеральнăй Канашĕн Президиумĕн секретарĕн çумĕ, Патшалăх Думин халăхсем хушшинчи ĕçĕсен комитечĕн председателĕ, Чăваш Енрен суйланнă депутат Константин Косачев пулса курчĕ, вăл шкула туса пĕтерессине хăвăртлатассишĕн мĕн пултарнине пĕтĕмпех турĕ, укçа-тенкĕ вăхăтра куçарса тăнине хăй контроллесе тăчĕ. Тăрăшуллă депутатăн ырă ĕçĕн çимĕçĕ халĕ куç умĕнчех – çак вĕренӳ çулĕнче шкул хута каять. Патшалăх Думин тепĕр депутачĕн, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци членĕн Павел Семеновăн ĕçĕсем те курăмлă. Вăл тимлĕх уйăрнипе тата тăрăшнипе кивĕ çуртсенче пурăнакансене çĕнĕ çĕре куçарассипе, Хĕр юханшывĕнчен шыв илсе килессипе çыхăннă ĕçсене хăвăртлатма май килчĕ, Йĕпреçре физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплекс тата ытти объект-сем çĕкленеççĕ.

Вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ, Павел Семенов пирĕн пата тăтăшах килсе çӳрет, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассине яланах тимлĕхре тытать, районта сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас ĕçсене хăйĕн сумлă тӳпине хывать.

***– Вячеслав Людвикович, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти членĕсен йышĕ пирĕн районта миçе çынна çитнĕ?***

– 2006-2007 çулсенче пирĕн районта 31 пуçламăш уйрăм чăмăртанчĕ, вĕсем 651 парти членне пĕрлештерсе тăраççĕ. Кăçалхи çул парти членĕсен йышĕ 2 хут ӳсрĕ. Çак парти майлă çынсен йышĕ вара татах та пысăкрах. Аса илер-ха, иртнĕ кĕркунне ЧР Патшалăх Канашне депутатсем суйланă чухне районти суйлавçăсен 62 проценчĕ «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти списокĕшĕн сасăланăччĕ. Парламентра пирĕн парти членĕсем ытларах пулни пирĕн халăх вĕсене ытларах шаннине пĕлтерет. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти членĕсенчен хамăр районта тăракан задачăсене пурнăçлама активлă хутшăнаканнисене ятранах аса илсе хăварасшăн эпĕ. Вĕсем çаксем: Э. А. Марушев – «Водстроймонтаж» тулли мар яваплăхлă общество директорĕ: Н. П. Терентьев – «Йĕпреç районĕнчи «Водоканал» МУП начальникĕ; В. А. Иванова – выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци начальникĕ; Р. Т. Валеев – Йĕпреçри çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕн тĕп инженерĕ; Р. И. Ильина – «Росгосстрах-Поволжье» страхлакан усă акционер обществи Йĕпреç поселокĕнчи уйрăмĕн начальникĕ; Г. Н. Майкова – Çĕнĕ Выçлири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕ; Н. Г. Климович – Йĕпреç хула тăрăхĕн тĕп библиотекин директорĕ тата ыттисем те.

***– Хальхи вăхăтра «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин районти уйрăмĕн членĕсем пуçарнипе мĕнле мероприятисем иртеççĕ?***

– Чи пысăк мероприяти çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Вырăнти политканаш парти членĕсене тата ăна майлă çынсене пуçтарса «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин кадрсен резервне кĕртнĕ кандидачĕсене çирĕплетес тĕллевпе анлă лару ирттерчĕ. Резерва кĕртнĕ кандидатсем пирĕнпе тĕл пулма килчĕç, сăмах каларĕç, хăйсемпе паллаштарчĕç. Парти членĕсем вĕсене кадрсен списокĕнче çирĕплетсе хăварма пĕр саслăн килĕшрĕç. Кун çинчен тĕплĕнреххĕн «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра çырнăччĕ (65-мĕш номер).

Партин пирĕн районти уйрăмĕн членĕсем пуçарнипе Йĕпреç поселокĕнче çамрăксен форумĕ пулса иртрĕ. Экологи субботникĕсене йĕркелесси те вĕсен пуçарулăхĕпех пулса пырать. Ялсен уявĕсем пулаççĕ. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин çамрăк гвардийĕ «Пицунда» тесе ят панă пĕве таврашĕнче, Буинск поселокĕнчи шыв хĕрринче тирпейлĕх тытса тăрас ĕçсене хăйсем çине илнĕ, ытти культура мероприятийĕсене те вĕсем пуçаруллăн хутшăнаççĕ.

**С. БЫКОВА**
**калаçнă.**

ПАЯНХИ КУН ТЕМИПЕ

# ХĂРУШĂ ИНКЕКСЕМ МĔНШĔН ПУЛСА ИРТЕÇÇĔ?

**Кăçалхи вырма ĕçĕсем хĕрсе пынă хушăра республикăри агропромышленноç комплексне кĕрекен предприятисенче тĕш тырă çапакан комбайнсемпе усă курнă чухне хăрушă пулăмсемпе çыхăннă инкексем пулчĕç.**

Акă çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Ульянов ячĕллĕ ЯХПКра кĕрхи тырăсен уйĕнче ĕçленĕ вăхăтра çырма хĕрринче çаврăннă чухне «Нива» СК-5 комбайн çаврăнса ӳкнĕ. Агрегат нумай çĕмĕрĕлнĕ, ăна тепĕр хут юсаса «ура çине» тăратма май килмест. Юрать-ха, вырмаçă çăмăл суран кăна илнĕ.

Çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи «Атлашевский» ЯХПКра та инкек пулнă. Пĕр уйран теприне агрегата куçарма тăнă комбайнер, штурвал умне хĕрĕнкĕ пуçпа ларнăскер, «Нива» СК-5М1 комбайнпа çул хĕрринчи канава сикнĕ, ăна тӳнтерсе янă.

Çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи «Таябинка» ОООра Дон-1500 комбайна йĕтем çине пушатма илсе пынă механизатор, хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнмасăр, пурнăçран уйрăлнă. Вырмаçă, çывăхранах иртекен ЛЭП (10кВ) тĕлĕнчех чарăннă агрегачĕн бункерĕ çине хăпарнă пулнă, çавăн чухне ăна ток çапнă. Пĕрремĕш медпулăшу вăхăтра илеймен механизатор çавăнтах вилсе кайнă...

Çав кунах асăннă районти «Янмурзино» кооперативра та инкек пулнă. Выльăх апачĕ хатĕрлекен КСК-100 комбайн двигательне ĕçлеттерме тăрсан, тĕп двигательтен бензин сирпĕнсе тухнă та, хăвăрт тивсе илме пултаракан ӳсен-тăран юлашкийĕсем çунма пуçланă, вут комбайн çине те сиксе ӳкнĕ.

Çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче, Вăрнар районĕнчи «Санар» агрофирмăн Дон-1500А комбайн (1990 çулта кăларнă) двигателĕ кĕске замыкани пулнипе çунма тытăннă, пушарта агрегатăн кабини, электрооборудовани, двигателĕн резина пайĕсем юрăхсăра тухнă.

Элĕк районĕнчи «Витязь» ООО уйĕнче ĕçлекен Дон-1500А комбайн, (1992 çулта кăларнă) çӳлерех асăннă тĕслĕхе пулах, вут-çулăмра пысăк инкек тӳснĕ. Ăна юсаса йĕркене кĕртме пачах та май çук.

Эпир çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Пушарсен тĕп сăлтавĕсем çаксем: тĕштырă комбайнĕсемпе усă курнă чухне хăрушсăрлăх техникин тата ĕç сыхлавĕн йĕркисене пăхăнманни; техникăна ӳсĕр çынсене шанса пани; пысăк вольтлă лини иртекен вырăнта хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене тĕпе хуманни; ĕçшĕн яваплă пулса тăракансем енчен тимлĕх çителĕксĕр пулни тата вут-кăвартан сыхланмалли йĕркесене пăсни; механизаторсемпе инженерипе техника службин çыннисем инкеке лекекенсене пĕрремĕш пулăшу пама пĕлменни.

Çав çитменлĕхсене пĕтĕмлетнĕ май, ЧР хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техника юсавлăхне асăрхаса тăракан Патшалăх инспекцийĕ хĕрӳ тапхăрта хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем тăрăх ăнлантару ĕçĕсем ирттерессине, механизаторсемпе, тракторист-машинистсемпе ирттерекен калаçусен вăхăтĕнче вĕсен пĕлĕвĕпе ăсталăхне тĕрĕслессине вăйлатма кирлине палăртнă. Çак ыйтусене те паянхи кун йĕркинчех тытни кирлĕ: тĕш тырă комбайнĕсем çинче вут-çулăма сӳнтермелли хатĕрсем, аптечкăсем пур-и, электропроводкăсем юсавлă-и?

1995 çулччен кăларнă Дон-1500 маркăллă комбайнсемпе (вĕсем пирĕн республикăра 104 единица, 7,6 процент) уйрăмах тимлĕ пулмаллине асра тытăр.

Хальхи вăхăтра машина-тракторсен паркĕсем кивелсе çитнĕпе пĕрех. Техникăн 90 процентĕ ĕçсене юрăхсăр. Хирсенче усă курмалли вăхăчĕ тухнă агрегатсем ĕçлеççĕ. Вĕсене юсаса, тĕрĕслесе тăракан службăсем пирки сăмах та пулма пултараймĕ. Паллă ĕнтĕ, кивĕ техникăпа тухăçлă ĕçлеме май килмест. Инкек курасси вара кашни утăмрах. Çакăн пек лару-тăрура хуçалăхсенчи механизаторсен, инженерсен, вăтам сыпăкĕсене ертсе пыракансен уйрăмах сыхă та тимлĕ пулни кирлĕ. Ăçта çав ыйтусене тĕпре тытмаççĕ, вĕсенче инкекĕсем те умлăн-хыçлăнах сиксе тухаççĕ.

***В. ГАВРИЛОВ,***
***Патшалăхăн техника асăрхавĕн районти инспекцийĕн тĕп инспекторĕ.***

## КОМБАЙНЕРЫ НА УБОРКЕ УРОЖАЯ /на 22.08.07 г., в тоннах/

| Ф. И. О. комбайнера | Хозяйства | Марка ко |
|---|---|---|
| Шибаев Ф. М. | «Красный партизан» | Дон-1500 |
| Шаршевич В. Ф. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Васильев В. Н. | «Красный партизан» | Дон-1500 |
| Никитин А. Н. | «Патман» | Енисей |
| Белов В. Р. | «Красный фронтовик» | Енисей |
| Чандров И. И. | им. Калинина | Енисей |
| Ярзунов Н. Р. | ЗАО АФ «Ибресинская» | СК-5 Нив |
| Григорьев В. Н. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Гордеев В. И. | им. Ильича | Дон-1500 |
| Сюдамов С. А. | им. Ильича | СК-5 Нив |
| Петров А. В. | им. Калинина | СК-5 Нив |
| Карпов В. Е. | «Искра» | СК-5 Нив |
| Тихонов А. Н. | «Искра» | СК-5 Нив |
| Романов Н. Н. | им. Калинина | СК-5 Нив |
| Анисимов О. Д. | им. Ильича | СК-5 Нив |
| Салмин В. И. | «Заря» | СК-5 Нив |

## МЕХАНИЗАТОРЫ НА ПОДЪЕМЕ ЗЯБИ /на 22.08.07 г., в гектарах/

| Ф. И. О. механизатора | Хозяйства | Марка тра |
|---|---|---|
| Иванов А. И. | «Красный партизан» | Т-150 |
| Егоров П. А. | им. Калинина | ВТ-150 |
| Васильев В. Н. | «Красный партизан» | МТЗ-892 |
| Никифоров А. В. | «Патман» | МТЗ-82 |
| Петров Н. В. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Степанов В. М. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Гордеев С. Н. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Гаврилов А. Н. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Русское В. М. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Раков С. А. | «Заря» | мтз-82 |
| Константинов А. В. | им. Калинина | МТЗ-82 |
| Иванов В. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |
| Иванов В. В. | «Патман» | Т-150 |
| Васильев М. К. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Иванов С. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |
| Тихонов А. Н. | «Искра» | МТЗ-1221 |
| Одинцов Н. Л. | им. Ильича | Дт-75 |
| Одинцов С. В. | им. Ильича | Дт-175 |
| Сорокин Д. Н. | «Искра» | Т-150 |
| Егоров Ю. А. | им. Калинина | ДТ-75 |
| Абдюшев Г. А. | им. Калинина | ДТ-75 |
| Никитин В. А. | «Патман» | МТЗ-82 |
| Федоров В. Ф. | «Красный фронтовик» | ДТ-175 |

### ÇИТЕС ÇУЛХИ ТУХĂÇШĂН

Кĕр тыррисене пухса кĕртессине ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн «Красный партизан» колхоз механизаторĕсем çитес çулхи тухăç çинчен шухăшлама тытăнчĕç. Вĕсем районта чи малтан кĕракине пуçăнчĕç. Çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче Николай Степанов тракторист хăйне шанса панă агрегата уя илсе тухрĕ. Хуçалăхра кăçал кĕр тыррисем йышăнакан лаптăка 500 гектара çитересшĕн. Акмалли уйсем пĕтĕмпех хатĕр.

***И. ВАСИЛЬЕВ.***

ЖУРНАЛИСТ ШУХĂШĔ

# ПУЛТĂР-И ÇЕМЬЕРЕ ÇУРАÇУПА КИЛĔШӲ!..

**Ялти çемье çинчен калаçу хускатсанах, эсĕ акă мĕнле шухăш патне пырса тухатăн: йăлари лару-тăру енчен илсен, ялти çемье хуларинчен самаях уйрăлса тăни куçкĕретех. Çакна пытарма çук тата çавăн уйрăмлăхĕсем те кашнишĕнех паллă.**

Ялта пурăнакансене тăватă стена хушшинче кăна ларнине кураймăн. Анчах та ку ыйтăва ял çыннисен аллисем кирек хăçан та ĕçпе çыхăннипе çеç ăнлантарса памалла мар. Ку енĕпе социологсем вара питех те «пуçаруллă». Вĕсем хăйсен тĕпчевĕсенче тӳрех çакна палăртма тăрăшаççĕ: кил-хуçалăхри тĕрлĕ ĕçсене тума хĕрарăм çавăн чухлĕ, арçын кун чухлĕ вăхăт уйăрать теççĕ. Çавăнтах процентсене хула çыннисен ĕçĕ-хĕлĕпе танлаштарса пăхаççĕ те, «тивĕçлĕ» пĕтĕмлетӳ туса хураççĕ: ял çыннине мĕнле майпа пушă вăхăт ытларах уйăрса памалла? Пĕр енчен, эпĕ çакна хирĕçлеместĕп-ха. Пушă вăхăт кирлех ял çыннине. Вăл пур-тăк, эсĕ хăвăн тавракурăмна ӳстерме те, ачасене воспитани пама та май тупатăн. Халĕ вара калаçăва шăпах ачасене воспитани парассипе çыхăннă ыйту çине куçарăпăр. Çемьере халĕ икĕ-виçĕ ачаран ытла мар. Кил хуçи хĕрарăмĕн хул пуççийĕсем çине тиенекен «йывăрăш» вара çакăн хыççăн татах та ӳсмелле, мĕншĕн тесен çемьере ачасене воспитани парасси пĕтĕмпе тенĕ пекех амăшĕ çинче. Ялпа хулари çемьесен хушшинчи уйрăмлăхсем чи малтанах çакăн çинче никĕсленнĕ те. Хулара ачасемпе тăвакан пĕтĕм ĕç пӳлĕмре, тĕрлĕ-пĕр вăйăсем урлă пулса иртет пулсан, ялта ун пек мар. Ял ачи пĕчĕкренех тăварлă тарпа çуралакан ĕç кăтартăвĕсене курса ӳсет. Ашшĕ ывăлне пуртăпа каскалама, хăма савалама, çавапа утă çулма, кĕреçепе йăран чавма т. ыт. те хăнăхтарать. Ача хăй те вăл е ку ĕç мĕнлерех тăрăшулăхпа çуралнине курса тăрать. Ачасем çемьере илекен воспитанин тĕп никĕсĕ шăпах вĕсем çитĕннисемпе пĕрле ĕçе хутшăннинче. Çавăн пек меслетсене çул парса пынă çĕрте кăна ачасен кăмăл-сипетĕнче ĕçе юратас туртăм-хавхалану çирĕпленет, вĕсем аслисен ĕçне хисеплеме вĕренсе пыраççĕ.

Пушă вăхăтăн пысăкрах пайне çемьере ачасене воспитани парассипе çыхăннă ыйтусене пурнăçлама яни пĕрре те пăсăк пулас çук. Акă нумай пулмасть мана Хурамал ялĕнчи çамрăк хĕрарăмсен калаçăвне итлесе тăма тӳр килчĕ. Вĕсен тĕрĕс шухăшлавĕ савăнтарчĕ питех те. Калаçу вăхăтĕнче хăйсен ачалăхĕсене те аса илме тăрăшрĕç вĕсем. «Мĕн тери тӳсĕмлĕ пулнă пирĕн анне. Йывăр килнĕ, анчах та вăл нихăçан та пуçне усман. Эпир вара апла мар-çке. Мĕн те пулин хамăр пăхнă пек пулмасан, çавăнтах тарăхма, сасса хăпартма тăрăшатпăр. Пурне те кăшкăрса пăрахма хатĕр çав вăхăтра. Пирĕн аннесем кирек мĕнле лару-тăрура та лăпкăнрах тытма тăрăшнă хăйсене. Чăннипех те ытларах пулнă вĕсен çирĕплĕхĕпе чăтăмлăхĕ», – терĕ вăтăрсене çитсе пыракан Нюра ятли. «Манăн хуняма вара – ăслă хĕрарăм. Вăл мана час-часах асăрхаттарать: «Мăшăру хĕрĕнкĕ чухне ун çине хыттăн ан кăшкăрсамччĕ. Çывăрса тăнă хыççăн лăпкăн калаçса ил те унпа, пĕтĕмпех вырăна ларĕ», – калаçăва хутшăнчĕ унăн тантăшĕ. «Арçын вăл арçынах. Эпир ăна кĕпе-йĕм çума та, ача кипкине улăштарма та хушатпăр, çавăн чухне вĕсем кунашкал пĕчĕк ĕçе те кирлĕ пек тума пултараймассине шута илместпĕр çав. Вĕсем çавна тума хăнăхман-çке. Аллисем çыхланнăран кайран еплерех вăтанаççĕ хăйсем! Е тата, ушкăнпа пĕрле пуçтарăнса тăратпăр та, упăшкасене «çиме» тытăнатпăр. Çапла туни, тем тесессĕн те, пĕрре те килĕшӳллĕ мар», – пĕр пытармасăр пĕлтерчĕ 35 çулхи Света.

Хальхи çамрăк хĕрарăмсем хăйсен амăшĕсен тыткаларăшĕсене «тишкерни», ман шутпа, питех те вырăнлă. Пурнăç опычĕ çапла майпа пуянланса, çĕнĕ майсемпе хушăнса пырать, вĕсем хăйсем тунă йăнăшсене асăрхаса илме пĕлни те лайăх курăнать çакăнтан. Хăй вăхăтĕнче вĕсен асламăшĕ-кукамăшĕсем те çаплах тунă ĕнтĕ. Кун-çул лавне пĕлсе те вырăнлă туртса пырассин «вăрттăнлăхĕсене» пĕлсе ӳсни кирек камшăн та ытлашши пулас çук. Ăрусен ăсталăхĕ çинче тытăнса тăрать те çемье. Пуянлăх-мул мар, çемьери килĕшӳпе çураçу – унăн тĕп тĕрекĕ.

Ял хĕрарăмĕсен философийĕ çак шайра пулни савăнтарчĕ мана. Вĕсене кил-çурта тĕрлĕпĕр япалапа тултарса лартас шухăш канăçсăрлантармасть. «Сирĕн вăл çук, пирĕн пур» текен сиенлĕ туртăм хыççăн та каймаççĕ вĕсем. Мĕн пуррипе тирпейлĕ, перекетлĕ усă курасси вара – тĕп вырăнта. Çапла пулмалла та, мĕншĕн тесен, ял хĕрарăмĕшĕн унăн аллинчи кашни япалах вăл – тарлă ĕçпе туяннăскер. Анчах та паянхи кун пирĕн ачасем пур чухне те çавăн пек пархатарлă шухăш патне пырса тухма ăс, вăй çитереймеççĕ-ха. Вĕсем пурнăç тĕрĕслевĕсене тĕрĕсех хак параймаççĕ. Пушă вăхăтпа та пĕлсе усă курасси вĕсен кун йĕркинче çук. Ял çамрăкĕсем те «çутти» еннелле ытларах туртăнма тытăнни те çакăнпах çыхăнман-ши? Çав туртăм сиенлĕ йăлана кĕрсе çирĕпленни ытла та хăрушă. Кăмăл-сипет чакса пыни, чун-чĕресене япăх туйăмсем çавăрса илме тытăнни шухăшлаттармалла пире. Тирпейсĕрлĕх, хуçасăрлăх ăçта тата хăçан тымар яма пуçлать-ха? Çемьере ачасене воспитани парасси çине çăмăлттайла пăхнă çĕрте мар-и?

Ман шутпа, ялти çемьери воспитани пахалăхĕсене лайăхлатса пырасси çинчен чи малтан ачасен ашшĕ-амăшĕсен шухăшламалла. Амăшĕсем çине вара мĕнлерех йывăрăш выртни пирки каламăпăр та, çакă унсăрах паллă. Тăрăшуллă, пултаруллă ачасем ытларах ялсенче ӳсни çинчен асăнни çĕнĕлĕх мар пулин те, çав шухăша тепре каласа хăварни питех те вырăнлă...

... Пĕр ялти хĕрарăмсем колхоз правленине ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе япăхланса çитни çинчен çăхав пама пынă. Вĕсем усă курнă çăлкуç юшкăнпа тулса ларнă-мĕн. «Упăшкăрсене тасатма хушăрха». Хĕрарăмсем çавăнтах сиксе ӳкнĕ: «Пĕр метр тарăнăш тасатмалла-çке». Ялта халĕ те паха шывсăр тертленеççĕ иккен.

Мĕн çинчен калать ку тĕслĕх? Юлхавнаянлăха хамăрах çул паратпăр-иç! Çав ялти арçынсене «хӳтĕлекен» хĕрарăмсене те ырлассăм çук. Пĕрлехи йышпа тăвакан ĕç пархатарне ачасем те уçăмлăн курса тăраççĕ-çке. Ку тĕслĕх çавна хирĕçлет. Кунашкал «сюжетсем» вара ачасен ăс-тăнĕпе кăмăл-туртăмне ла-йăх витĕм кӳрекен ырă майсемпе меслетсене çине тăрсах шырама хистеççĕ.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Смычка поселокĕнче пурăнакан **Анатолий Лукич РАКОВА** пĕтĕм чун-чĕререн юратса, чĕре çумне ăшшăн ыталаса çуралнă кунĕпе – 60 çул тултарнă ятпа – саламлатпăр.



Ылтăн пек ыр çыннăмăр:
Мăшăр, атте, асатте,
Эс салхуллă ан пул ĕмĕрне.
Ăшшăн-ăшшăн кулса
Кĕтсе ил эс пире,
Сывлăхпа, вăй-халпа
Эс çитсемччĕ 100е!

Хисеплĕ хăта, ӳлĕмрен те ял çинче ырă ятлă, çемьере лайăх тĕслĕхлĕ пулма сана таса сывлăх, сутă ăраскаллă кун-çул, савăк кăмăл сунатпăр. Юбилей ячĕпе!

***МĂШĂРĔПЕ АЧИÇЕМ, МĂНУКĔСЕМ, ХĂТИ-ТĂХЛАЧИСЕМ.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

дорогого, любимого мужа, внимательного и заботливого отца, дедушку – **ХАРИТОНОВА Семена Харитоновича** (п. Ибреси) – с юбилеем, 75-летием. Желаем доброго здоровья, бодрого настроения, твердости духа на долгие годы и никогда не унывать, смотреть на жизнь с вдохновением.

День рождения – хорошая дата,
А юбилей прекрасен всегда.
Жизнь настолько светла и богата,
Что не стоит грустить никогда.
Пусть сердце старости не знает,
Пусть стороной обходит зло.
И пусть в глазах твоих сияют
Здоровье, счастье и тепло.

***ЖЕНА, ДЕТИ, ВНУКИ.***

**х х х**

От всей души, горячо и сердечно поздравляем наших дорогих родных, проживающих в п. Ибреси, **АЛЕКСАНДРОВУ Елизавету Семеновну** с днем рождения, 82-летием, а ее сына, нашего любимого брата, дядю, друга **АЛЕКСАНДРОВА Владимира Алексеевича** с юбилеем – 60-летием! Желаем крепкого здоровья, счастья, успехов, благополучия во всем и всегда, долгих лет.

Много слов хороших
Нам хочется сказать,
Доброго здоровья,
Счастья в жизни пожелать.
Сердцем и душою
Вечно не стареть.
И прожить на свете
Еще много-много лет.

***Семьи СЕМЕНОВЫХ /г. Москва/, КУРАКОВЫХ /г. Комсомольск/, БАСОВЫХ /г. Новочебоксарск/, родные, близкие, друзья.***

## ОТДЕЛ ЭКОНОМИКИ И УПРАВЛЕНИЯ ИМУЩЕСТВОМ АДМИНИСТРАЦИИ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА

**сообщает, что Министерством экономического развития и торговли ЧР в целях государственной поддержки субъектов малого предпринимательства, производится субсидирование процентных ставок по кредитам, полученным субъектами малого предпринимательства (малыми предприятиями, потребительскими кооперативами, частными предпринимателями) в кредитных организациях. ООО «Гарант-консалтинг» разрабатывает на безвозмездной основе для субъектов малого предпринимательства бизнес-планы при наличии ходатайства главы и технико-экономические обоснования для получения кредита.**

**Список документов для оформления субсидии и ходатайство можно получить в отделе экономики и управления имуществом (каб.307) администрации района.**

**Все документы на субсидирование процентных ставок по кредитам необходимо представить в Министерство экономического развития и торговли ЧР (Президентский бульвар,10).**

**Справки по телефону: 2-25-71».**

**2-2**

**609. В хозяйственный магазин СРОЧНО ТРЕБУЕТСЯ бригада продавцов в кол-ве 4-х чел. Желательно с опытом работы в хозяйственном отделе. Зарплата высокая. Тел.: 2-13-60 (после 20 час.), 89278538686.**

**610. ПРОДАЕТСЯ телка мышиной масти, отел в начале октября. Цена договорная. Тел.: 89279949381.**




## СĂМАХКАÇМĂШ




**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Пĕчĕк çырма урлă хывнă кĕпер. 3. «Мастер и ...» – Михаил Булгаков çырнă роман. 8. Халапсенчи, мифсенчи пăхаттир. 13. Пулă «капкăнĕ». 14. Шкул ачине кирлĕ хатĕр. 15. Колорадо нăрри юратакан «меню». 19. Ахăлтатма юратакан çын. 20. Хими элеменчĕ, металл. 21. Хăй вăхăтĕнче «Красный партизан» колхоза ертсе пынă çын. 22. Платникĕн ĕç хатĕрĕ. 24. Кӳршĕ районти халăх (нумайлă хис.). 25. Строительствăра çак япала питĕ кирлĕ. 29. Вырăсла – Абрам, чăвашла – ... 30. ... Куросова – яппунсен тĕнчипех паллă режиссерĕ. 31. Чăваш арçынĕн ячĕ. 32. Петр Осипов çырнă драма. 33. Библири сăнар. 34. Вырăс музыкин классика оперисенчен пĕри. 35. Социал-революционер (кĕскетсе). 36. Строительствăри ĕç. 40. Спорт вăййин тапхăрĕ. 45. Сăмахсен кĕнеки. 47. Типографи шрифчĕ. 48. Кану вăхăчĕ. 49. Пултарулăх палли. 53. Алексей Талвир çырнă роман. 54. Чăваш патши. 55. Хĕрача ячĕ. 56. Турра хирĕç пыракан çын. 57. Чăваш журналĕ.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Пуканесен «тăшманĕ». 2. Вырăсла – оборот, чăвашла – ... 4. Нуша, терт, инкек. 5. Францири хула-порт. 6. Германири юханшыв. 7. Çар хатĕрĕ. 9. Владимир Набоков çырнă паллă роман, çав ятлă кинофильм та пур. 10. Одисея тӳсĕмсĕррĕн кĕтнĕ хĕрарăм. 11. Чăваш Республикинчи хула. 12. Турцин пуç хули. 16. Николай Теветкел çырнă поэма. 17. Тропикри ӳсен-тăран. 18. Çăмăл атлетсен чупăвĕ. 23. Суккăр пыршă шыççи. 26. Путишле çын. 27. Францири коммунистсем кăларса тăнă хаçат. 28. Вăл пушăран та вирлĕрех пырса тивет. 35. Паллă вырăнсем тăрăх çул çӳрени. 37. Пир-авăр та, карттăсен кĕнеки те. 38. Православи тĕнне тытакан арçынсен пысăк мăнастирĕ. 39. Хăрушă пулăм. 41. Хăй вăхăтĕнче вăл ЧР культура министрĕ те, «Çамрăк коммунист» хаçатăн тĕп редакторĕ те пулнă. 42. «Шуйттан мăйраки» (зоол.). 43. Грузири курорт вырăнĕ. 44. К. Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла ăнăçлă куçарнă тăлмач. 46. Пĕтĕм тĕнчипе паллă чăваш ялĕ. 49. Вăрманти вĕçен-кайăк. 50. Çĕрпӳ районĕнчи пысăк ял. 51. Чап кăшăлĕ. 52. Йĕркесĕрлĕх, хуçасăрлăх.

### ХАÇАТĂН 66-МĔШ НОМЕРĔНЧЕ ПИЧЕТЛЕННĔ СĂМАХКАÇМĂШ ТУПСĂМĔСЕМ

**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Пушă. 3. Утаркасси. 8. Парк. 13. Ратне. 14. Парăм. 15. Каланча. 19. Радист. 20. Тритон. 21. «Бурлаки...». 22. Клуб. 24. Хăнăхтару. 25. Пике. 29. Юмарт. 30. Сĕрен. 31. Анюта. 32. Пичче. 33. Аслăк. 34. Вирта. 35. Явăл. 36. Сарафанов. 40. Шлак. 45. Атакама. 47. Ăмăрту. 48. Кăрлач. 49. Ярослав. 53. Кушел. 54. Елчĕк. 55. Ăсан. 56. Авлантару. 57. Утас.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Пушарник. 2. Шарада. 4. Трек. 5. «Реал». 6. Авăн. 7. Сапа. 9. Армути. 10. Калинкке. 11. Стасов. 12. Арарат. 16. Асуан. 17. Арлăх. 18. «Чакка». 23. Ломоносов. 26. Клетчатка. 27. Утнаккă. 28. Осипова. 35. Ярмăркка. 37. «Ротор». 38. Фокус. 39. Немка. 41. Карчамас. 42. «Катюша». 43. Укăлча. 44. Кăркка. 46. Плакат. 49. «Ялав». 50. Охра. 51. Лист. 52. Веер.

**УВАЖАЕМЫЕ РЕКЛАМОДАТЕЛИ!**

**Делайте бизнес с нами. Реальный тираж, реальная реклама.**

**Телефоны: 2-11-92, 2-11-97.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*За главного редактора* **БЫКОВА С. В.**

*Çĕнтерӳшĕн (За победу)*

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3274: чув. – 2422, русск. – 852. Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ**

**Срок сдачи в печать — 17.00**

**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Кузнецов Г. В.**